Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (7792) № * Юн кун, 2010 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Çамрăксенче – малашлăх!

Патриотла воспитани



Канаш хулинчи 2 № професси училищин отрячĕ Муркашри вăйăсенче пулма хавас.

Республикăра та, Раççей шайĕнче те çамрăксене париотла воспитани парасси питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унăн пĕр пайĕ – çамрăк армеецсен юхăмне аталантарса пырасси.

Республикăри çамрăк армеецсен юхăмĕн «Зарница» тата «Орленок» XXXXII вăййисем кăçал та Муркашра иртеççĕ. Малиновка ялĕ çывăхĕнчи вăрман уçланкине июнĕн 26-мĕшĕнче республикăри тĕрлĕ шкулсенчи «Зарница» тата «Орленок» отрячĕсем, професси училищисен, кадет класĕсен ушкăнĕсем тата çарпа патриот клубĕсем – пурĕ 74 команда килсе вырнаçрĕ.

Республика вăййисене савăнăçлă лару-тăрура уçма вара выросарни кун ачасем патне Н. Федоров Президент та килсе çитрĕ. Вăл хăйĕн çамрăклăх çулĕсем те вăйăсене пухăннă çамрăксенни пекех интереслĕ, мал туртăмлă иртнине каларĕ. Çакăнпа пĕрлех Муркаш çĕрĕ çинче вăйăсене пĕлтĕрхинчен те лайăхрах йĕркеленине палăртрĕ Президент.

Çак вăйăсенче Муркаш районĕн чысне пурĕ пилĕк команда хӳтĕлет: «Родина» тата М. Шуйцев ячĕллĕ çарпа патриот клубĕсем, Муркаш лицейĕн кадечĕсем, Оринин шкулĕнчи «Орленок» тата Чуманкасси шкулĕнчи «Зарница» отрядсем. Çамрăксем кашни кунах тĕрлĕ конкурса хутшăнаççĕ: теори пĕлĕвне те тĕрĕслеççĕ, практикăна та. Каççерен хăйсен ĕçне пĕтĕмлетӳ туса çар листовкисем кăлараççĕ. Вĕсен кăтартăвĕсем хальлĕхе япăх мар, анчах та конкурссем вĕçленмен-ха.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Пĕрлехи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе

**Ларуран**

**Июнĕн 28-мĕшĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен Муркаш район пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна вырăна тухса Катькас ял тăрăхĕнче, кунти ялти клубра ирттерчĕç.**

Район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева малтанах ял тăрăхĕсем 2010 çулхи бюджетсене мĕнле пурнăçласа пыни пирки каласа пачĕ.

Район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова хăйĕн сăмахĕнче вырăнти самоуправлени органĕсен суйлавне хатĕрленсе ирттерессипе умра тăракан ыйтусене хускатрĕ.

Кайран ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем Чăваш Республикинчи чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн коллегийĕн вырăна тухса ирттерекен анлă ларăвĕн ĕçне хутшăнчĕç.

Малтанах Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев вырăнти ялсенче пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе епле ĕçлесе пыни пирки каласа пачĕ. Ку енĕпе территорире вырнаçнă «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики пысăк усă кӳрет. Ялсем çывăхĕнче çĕр айне шыв цистернисем вырнаçтараççĕ. Территорире кун пеккисене 7 вырнаçтарнă та ĕнтĕ. Инкек килсе тухсан кирек хăçан та вĕсенчен шыв уçласа илме пулать. Çавна валли шыв уçламалли ятарлă помпа-насус та туяннă. Сăмах май, шыв çу кунĕсенче кăна мар, хĕлле те уçласа илме пулать. Мĕншĕн тесен çĕр айĕнчи цистернăсене сивĕсем пуçăниччен хупласа хӳтĕлеççĕ.

Кунпа пĕрлех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе Чăваш Республикинчи чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн коллегийĕн вырăна тухса ирттерекен анлă ларăвĕн ĕçне хутшăнакансем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществине çитрĕç. Чăх-чĕп фабрикин юлашки вăхăтри производство кăтартăвĕсем пирки асăннă май, фабрика директорĕ Н.Г. Ванеркин кунти пушар деповĕн ĕçĕ-хĕлĕпе туллин паллаштарчĕ.

Чылай хуçалăхра, ял тăрăхĕнче укçа-тенкĕ çитменнипе сăлтавласа пушар сӳнтермелли автомашинăсене салатса-юхăнтарса пĕтерчĕç пулсан, предприятире ку çулпа каяс темен. Пушар деповĕ кунта тивĕçлĕ шайра. Ăна хĕллехи вăхăтра хутса ăшăтаççĕ. Кирек хăçан та 9 кубла метр шыв илсе кайма пултаракан пушар автомашини çула тухма хатĕр.

Çавна та каласа хăвармалла. Предприятире Т–150 трактор хыçне кăкармалли ятарлă прицеп та пур. Ун çине 11 тонна шыв кĕрекен цистерна вырнаçтарнă. Кунта тата помпа вырнаçтарсан, ку техника хăех пушар сӳнтерме тухса кайма пултарать.



Ĕçлĕ, кунсăр пуçне тата савăнăçлă тепĕр самант Мăн Сĕнтĕрти пушар хуралĕн посчĕн çуртĕнче юсав ĕçĕсем туса ирттернипе, кунти поста пушар машини парнеленипе çыхăнчĕ. Кунта хăтлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, пушарнăйсене канма тата хăйсен ĕçне тивĕçлипе пурнăçлама майсем туса панă.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: Мăн Сĕнтĕрсен – пушар сӳнтермелли çĕнĕ автомашина.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Чăваш автономи кунне уявланă май**

## 90 çул тултарнă тĕле – 90 миллиард тенкĕ!

***ЧР экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ И.Б. Моторин Чăваш Ен Президенчĕн планеркинче Республика кунне ирттернин малтанхи пĕтĕмлетĕвне туса панă.***

Республика кунне тата Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнине халалланă мероприятисене тĕнчери 20 çĕр-шывăн дипломати корпусĕн тата бизнес пĕрлĕхĕн представителĕсем, Раççейăн 61 регионĕн (12 республика, 39 облаç, 7 край, 1 автономи округĕн, Мускав тата Санкт-Петербург хулисен) делегацийĕсем хутшăннă.

Бизнес тата влаç органĕсен представителĕсемпе ĕçлĕ 100 ытла тĕл пулу ирттернĕ. Вĕсен вăхăтĕнче пĕрлехи проектсене пурнăçлама май паракан килĕшӳсене, протоколсене, меморандумсене алă пусса çирĕплетнĕ, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă.

Республика кунĕ вăхăтĕнче экономика тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятисем сахал мар иртнĕ.

Малтанлăха хакланă тăрăх 2010 çулта Республика кунне ирттернĕ май Чăваш Республикин экономикин мĕн пур отраслĕсенчи организацисемпе халăхăн экономика тĕлĕшĕнчи усси 90 миллиарда яхăн тенкĕпе танлашнă.

**Райадминистрацире**

## Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнчи 442 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Галина Александровна ДИМИТРИЕВĂНА**, «Птицефабрика «Моргаушская» уçă акционер обществин чăхчĕп фабрикисемпе механизациленĕ фермăсен операторне;

– **Владимир Витальевич СЮЛЬДЕРКИНА**, «МСО «Моргаушская» хупă акционер обществин водительне;

– **Анатолий Петрович БЕЛОВА**, Чăваш Республикин культура министерствин «Редакция Моргаушской районной газеты» «Çĕнтерӳ ялавĕ» ЧР автономи учрежденийĕн экономика тата экологи пайĕн ертӳçине;

– **Алефтина Иосифовна САЛТЫКОВĂНА**, ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин çулланнă çынсен тата инвалидсен Мăн Сĕнтĕрти вăхăтлăх пурăнмалли «Моргаушский центр социального обслуживания населения» республика патшалăх учрежденийĕн уйрăмĕн социаллă ĕçченне.

**Çынсен сывлăхне сыхлассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнчи 466 № йышăнăвĕпе** 2-мĕш номерлĕ район больницин хирурги уйрăмĕн пуçлăхне **Николай Ефимович ГРИГОРЬЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата ĕçри çитĕнӳсемшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнчи 475 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Юлия Васильевна МИХАЙЛОВĂНА**, «Муркашри автомобильсен техника сервисĕ» уçă акционер обществин строительство участокĕн штукатур-малярне;

– **Петр Петрович ВАСИЛЬЕВА**, районти шалти ĕçсен пайĕн милици капитанне.

**Саламлатпăр**



Юратнă аннене, ырă кăмăллă асаннене, хисеплĕ тăвана – Нискасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Ивановна ВАНЮШКИНĂНА** 75 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 14-14.**

# Шыв çукки пăшăрхантарать

**Çыру хурав кĕтет**

Эпир, Кашмаш ялĕнче пурăнакансем, 10 çултан кая мар ĕнтĕ ĕçмелли шыв çитменнипе аптăратпăр. Шывĕ вăл çу кунĕсем çитсен ĕçме çеç мар, тем тума та питĕ кирлĕ. Кĕпейĕм çума та, мунча хутса çăвăнса тасалма та, выльăх-чĕрлĕхе ĕçтерме те. Çырминче пирĕн пĕр пĕве те çук. Çак виçĕ çухрăма тăсăлакан ялта та пĕр пĕве çук. Кам килсе туса парĕ вăл пĕвене? Хур-кăвакал чăмма мар, сиксе каçмалăх шыв пулинччĕ. Шыв башни шывсăр юлмарĕ пулĕ те, анат тата ту енче пурăнакансем шывсăр лармаççĕ. Вĕсем пахчисене те шывпа шăвараççĕ. Çĕр улми таранах. Пирĕн вара, ял варринче пурăнакансен, мĕншĕн çак асапа тӳсмелле?

Ытти çулсенче те шыв çукки пулман мар. Анчах та ку таранччĕнех шывсăр пурăнман. Кăçал çӳлтен те çуса памарĕ, тем вăхăтран варах çумăрсем çук.

Кам хуçа шывпа тивĕçтерессипе? Пĕрлешӳллĕ хуçалăх-и, ял тăрăхĕ-и? Шывпа усă курнăшăн тесе пире пĕлтĕр те вăйпа тенĕ пекех алă пустарчĕç, кăçал та çав хуйхах пирĕнтен уйăлмасть. Çăва тухсанах çак хуйхă пырса çапать ял халăхне. Пĕлтĕр те шывпа колонкăран ăсса усă курман пулсан та, укçине тытса юлчĕç ĕç укçинчен. Пĕр курка та ăсса курман эпир колонка шывне.

Килти пахчара икĕ çул каялла çăл алтрăмăр. Юрать вăл пур пирĕн. Хăшĕсен вăл çук вĕт-ха. Килте çăл пулмасан чун тухать вĕт. Çулла пушшех те нумай кирлĕ шывĕ. Пур ӳсен-тăранĕ, пахча çимĕçĕ шывсăр аптăрать, пурте шыв ыйтаççĕ.

Килти çăлти шывпа усă курни шутра мар иккен. Колонка шывĕн пăрăхĕ киле кĕрет пулсан, шывĕ пымасан та шывпа усă курнă шутланать имĕш. Укçа тыттарас темесен çав пăрăхсене татса тухмалла терĕç пĕлтĕр хуçалăх кантурне шыв шăтăкĕ пирки калаçма кайсан. Ял тăрăхĕн администрацийĕнчен килте çăл пурри пирки справка та илсе кайса кăтартрăм. Ку справка ниме те пĕлтермест терĕç. Ытти çулсенче шывĕ çӳлтерехре пулмасан та, аялта та пулин пурччĕ. Ниçта шыв çукран çав шăтăкран ăснинех ĕçнĕ, вилмен уншăн.

Ялта шывсăр ларнине пула кил питĕрсе тухса утма та хăрамалла. Каçхине çывăрма выртма та хăракан пултăмăр. Хальхи вăхăтра ни ял хуралĕ çук. Малтанхи вăхăтра черетпе ял хуралĕ тăнă урампа. Шакки тăни тетчĕç ăна ун чухне. Тата пушарнăйсем килĕрен тĕрĕслесе çӳретчĕç: кăмака мăрьисем юсавлă-и, каткара шыв пур-и т. ыт. те.

Халĕ вара никама та нимĕн те кирлĕ мар пулас. Укçа сăптăрма çеç манмаççĕ. Таçта пĕве пекки пулсан та ăна та уйрăм çынсем карта тытсах, табличка çаксах, «частная собственность» тесе хуркăвакала та ишме те кĕртмеççĕ. Мĕнле пулать вара вăл? Пĕвине ун пек пулсан хăйсен пахчинче чавса тутарччăр. Никам та килсе тĕрĕслемест çакна. Е курсан та курмăш пулаççĕ-ши?

Питĕ нушаллă пурăнатпăр шыв çуккипе. Кам ответлă кун пирки? Тархасшăн килсе пăхăр, тĕрĕслĕр. Анчах та çырури сăмахсенче суя çук.

Хĕлле вара çанталăк сивĕ тăнă пирки урамран кĕрекен шыв çулĕсем нумайăшĕн шăнса ларчĕç. Çăва тухсан та шывĕ пулмарĕ. Пирĕн пĕр сĕнӳ пур: çак пысăк ялта тепĕр шыв башни лартма май çук-ши? Миçе çул ĕнтĕ шывсăр аптăратпăр вĕт-ха. Темрен тем пуласран сехре çук. Кашмаш ялĕ вĕт ялан çуннă. Мĕнле никама та хăратмасть çак ыйту. Турă сыхлатăр çеç пире çак инкекран, Турă астутăр.

Çакăн пек пысăк ял шывсăр ларни нимĕнле пуçлăха та канăçсăрлантармасть-ши вара? Ни пĕви, ни çăлĕ çук пирĕн ялта. Хăть пĕвисене тутарасчĕ. Ĕлĕк пулсан (вунă çул каяллине халĕ ĕлĕк тетпĕр) çурхи ĕçсем вĕçленсен пĕвесем тума çырмана улăм тиесе пыраттăмăр, вăрмантан çапă касса килеттĕмĕр. Тунă пĕвисем хăть çу каçма кăна чăтнă пулсан та, кашни çулах пĕвесем пĕвелеттĕмĕр. Кам килсе туса парĕ халĕ пире пĕве? Ют ялсенчен килсе туса парĕç-ши? Çавна кĕтсе пурăнаççĕ-ши пуçлăхсем?

Ял тăрăхĕн администрацийĕ хăш хуçалăхра миçен пурăнни пирки списоксем тăратать. Килти хуçалăхра миçен пурăнни не, мĕнле выльăх тытса усрание вĕсем лайăх пĕлеççĕ. Шывшăн укçа тытма кирлĕ-çке-ха вĕсем. Анчах та шывĕ çук. Курман эпир ăна.

Урамра шыв çуккине кура кам ăçтан пĕлет, çавăнтан кӳрсе килет шывне. Хăшĕсем автомашинăсем хыçне прицепсем кăкарса бидонсемпе кӳршĕ ялсенчен турттараççĕ, транспорт çуккисем çырмана çăл куçа каяççĕ. Кам çĕклемпе, кам канистрăсемпе. Тата килтен тухса çӳреймен пĕччен ватăсем те пур вĕт, унтĕ тухать вĕт вĕсен шывсăр.

Ыйту пирĕн патра анчах мар пулин те, питех те çивĕч. Кун пекех пурăнса май çук. Тен хулари хватерсенчи пек килĕрен шыв счетчикĕсем лартса памалла?

Чунтан тархасласа ыйтатпăр çак çырăва хаçатра пичетлесе кăларма. Хут çинче çеç ан юлтăрччĕ çакăнта хускатнă ыйту. Эпир укçашăн мар, чун ыратнипе çыратпăр. Çак çыру çинчи сăмахсем пурте тĕрĕс тесе алă пусатпăр.

**Т.А. ПОЛИКАРПОВА, Е.Е. ДЕМЬЯНОВА, Е.А. ТИХОНОВА, Р.М. ПАРКОВА, З.Г. СУРИКОВА.**

(Пурĕ 38 çын алă пуснă).

**Райадминистрацире**

# Хисеп грамотине тивĕçнĕ

***Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнчи 464 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Алевтина Клементьевна АГАПОВĂНА**, районти тĕп больницăн акушер уйрăмĕн медицина сестрине;

– **Эльза Ивановна АВИЛОВĂНА**, районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн медицинăн аслă сестрине;

– **Галина Николаевна КУЗНЕЦОВĂНА**, районти тĕп больницăн анестезиолог-реаниматолог врачне.

**Шухăш, сĕнӳ**

# Хамăра хамăр хисеплемелле

***Паянхи экономика кризисĕ вăхăтĕнче тĕрлĕрен предприятисене ура çинче тытăнса тăма тата малалла аталанса пыма çăмăл мар. Ахальтен мар ĕнтĕ унта та кунта промышленность, вĕсемпе пĕрлех ял хуçалăх предприятийĕсем пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ тĕслĕхсене кунсеренех курма пулать. Кун пек йывăрлăхсенчен районти предприятисем те айккинче тăрса юлаймаççĕ. Çавна май район бюджетĕнче пухăнакан укçа-тенкĕ шайĕ те хальхи вăхăтра чакса кăна пырать тесен те йăнăш пулмасть.***

Мĕн тумалла-ха лару-тăрăва кăшт та пулин лайăхлатас тесен? Унсăрăн районта пурăнакансен пурнăç шайне те лайăх еннелле улшăнусем кĕртме хĕнтерех вĕт-ха. Ман шутпа çак ĕçре усă курман резервсем çук мар. Район бюджетне укçа-тенкĕ хывас ĕçре районти Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тӳпи пĕчĕкех мар. Анчах та вĕсен ĕçĕнче хальлĕхе кунта ĕçлекенсенчен кăна килмен чăрмавсем те пур-ха. Магазинсенче пăхатăн та тĕлĕнетĕн: ăçтан кăна илсе килнĕ таварсене сутмаççĕ пулĕ. Уйрăмах ĕçмелли тата çимелли продуктсем нумай. Нумайăшне çак райпосен ĕçченĕсем те туса кăлараççĕ вĕт-ха. Тĕслĕхрен, тĕрлĕ йышши ĕçмелли пылак шыва, пĕремĕк, печени, сушкă тата ытти йышши нумай продукта Мăн Сĕнтĕрти çăкăр завочĕ туса кăларать. Кунсăр пуçне аш-пăшран хатĕрленĕ тĕрлĕрен продукта илес пулсан... Е тата çăкăр, батон, булка тавраşĕсене икĕ райпо ĕçченĕсем те хулара е ытти çĕрте туса хатĕрлекенсенчен япăхрах туса кăлараççĕ теме май çук. Райпосенчи ĕçченсем тăрăшуллă, халăха лайăх таварпа тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Тата хăйсен ылтăн аллисемпе тунă таварпа районта пурăнакансене кăна мар, ытти вырăнсене тухса çӳресе тивĕçтереççĕ.

Паянхи куна вара суту-илӳ ĕçĕ-хĕлĕпе райпосем çеç çыхăнман. Ку тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм çынсем е предпринимательсем те сахал мар. Малтанхи вăхăтра пулсан ун пеккисене урăхларах ятпа чĕнетчĕç. Паллах, мĕнле калани нимех те улăштармасть, вĕсем те халăх ыйтнине тивĕçтереççĕ вĕт-ха. Районти ваккăн сутакан тавар çаврăнăшĕн калăпăшне илес пулсан вара вĕсен тӳпи ӳссе кăна пырать. Анчах та район бюджетне хывакан укçа-тенкĕ калăпăшĕпе çакă шайлашуллăх пулса пымасть-ха.

Ку, паллах ĕнтĕ, икĕ тĕрлĕ бухгалтерипе тата ытти йышши «çĕнĕлĕхсемпе» çыхăнни иккĕлентермест. Апла пулин те манăн суту-илӳ ĕçченĕсене ытларах хамăр райпосем е тĕрлĕрен ытти йышши предприятисем туса кăларакан продукци сутма сĕнес килет. Хальлĕхе вара çăкăр таранах хулара туса кăларакан таварсене сутакансем пур. Çакă вăл район çыннисен укçи-тенкине района аталантарма хывас вырăнне хулана е ытти çĕре ăсатни пулать.

Малтан пулсан патриот, патриотизм теттĕмĕр. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ вăл Тăван çĕр-шывпа кăна мар, тăван районпа та çыхăннă. Районта вăл кунта пурăнакан кашни çыншăн – пĕчĕк Тăван çĕр-шыв. Çавăнпа та унăн аталанăвĕшĕн, ачасен пуласлăхĕшĕн кашнин тата пур майсемпе те тăрăшмалла. Май пур таран район çыннисене хамăрăн экологи енчен таса продукципе ытларах тивĕçтерсе район бюджетне пуянлатас тесе кашни предпринимателĕн тăрăшмалла.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

# Республика кунĕ Оринина та çитрĕ

**Уяв**



Орининти Культура çуртĕ çуменчи «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ Республика кунне хутшăнчĕ. Лакрей вăрманĕнчи сцена çинче хамăрăн пултарулăхпа ыттисене паллаштартăмăр, Шупашкара килнĕ нумай коллектив пултарулăхне курса, ал ĕçĕсен куравĕнче пулса савăнтăмăр. Пирĕн пек коллектив чылай пулчĕ уявра, анчах йĕркелӳçĕсем никама та тимлĕхсĕр хăвармарĕç.

Çав кун ушкăнсем пĕр-пĕрне хăнана чĕнни пĕрре мар курма тӳр килчĕ. Пире те, сăмахран, Сахалина пыма йыхравларĕç. (Май килсен тен кайса курăпăр та.)

Пирĕн пата вара эпир чĕннĕ хăнасем – Мускав облаçĕнчи «Белая дача» вырăс юррин халăх хорĕ – тепĕр куннех çитрĕç. Çак хора Орининтан тухнă Ирина Ястребова 30 çул çӳрет мĕн. Кăçал вара çак хор хăйĕн 48 çулне паллă тăвать. Вĕсем ку таранччен хăйсен илемлĕ юррисемпе таçти çынсене те савăнтарнă. Юрăçсем каялла кайма васкаççĕ пулин те Оринин тăрăхне килсе курмасăр каймарĕç.

Вĕсен концертне курма пухăннă çынсем, уйрăмах ваттисем, çав тери кăмăллă юлчĕç. Республика кунĕн пĕр пайĕ пирĕн патах çитрĕ тейĕн. В. Александров хăнасене «Шуракăш» юрлакан юрăсен дискне парнелерĕ, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Суриков та Мускав юрăçисене килсе курма май тупнăшăн чĕререн тав турĕ.

***Ирина СКВОРЦОВА,***
**«Шуракăш» ансамбле çӳрекен.**

**Ларуран**

# Пĕрлехи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

АЦ-3,5-40 пушар машинин уççине Мăн Сĕнтĕрсене панă май Чăваш Республикинчи гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ В.Н. Петьков пурне те саламларĕ, çĕнĕ техникăпа типтерлĕ усă курма, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе ăнăçусем сунчĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хăйĕн сăмахĕнче хальхи вăхăтра çĕнĕ техникăсăр май çуккине палăртрĕ, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерекенсене малашне те ăнăçусем сунчĕ.

Каласа хăвармалла: Мăн Сĕнтĕрти пушар постне çĕнĕ автомашина уйăрса парассипе тимленĕшĕн Раççей Геройне Евгений Борисова та тав сăмахĕ каламалла.

Кайран Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн актовăй залĕнче Чăваш Республикинчи чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн коллегийĕн анлă ларăвĕ ĕçлерĕ. Унта район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Милютин пушар хăрушсăрлăхне, шыв çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессине епле ĕçлесе пыни пирки отчет туса пачĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Прокуратура материалĕсем тăрăх**

# Малтан – эрех, кайран...

***Тăвакан преступленисенчен ытларахăшĕ эрех ĕçнипе çыхăнни никамшăн та çĕнĕлĕх те, вăрттăнлăх та мар ĕнтĕ. Апла пулин те кун пек преступленисем тăтăшах тĕл пулаççĕ.***

Акă Шупашкар хулинче 1976 çулта çуралнă, халĕ Шупашкар районĕнчи Анат Кĕнер ялĕнче пурăнакан Андрей Валентинович Дмитриевăн та, тĕпрен илсен, эрех ĕçнине пула тунă преступленишĕн суд тенкелĕ çине ларма лекет. Чылай çуллăха ăна ирĕкрен хăтарасси, обществăран уйăрасси те иккĕлентермест.

2010 çулхи майăн 16-мĕшĕнче 1 сехет тĕлĕнче А.В. Дмитриев, ӳсĕрскер, Карамалькасси ялĕнче хăйĕн мăшăрĕпе И.Г. Дмитриевăпа хирĕçӳ пуçарнă. Ӳсĕрле вăл нимĕн те уяса тăман. Хĕрарăма пуçĕнчен,ӳт-пĕвĕнчен тапса-çапса, чышса пĕтернĕ. Хĕрарăм çакăн пек пысăк та йывăр сурансене чăтайман, тепĕр темиçе минутран унăн чунĕ тухнă.

Халĕ чавса çывăх пулĕ те, анчах çыртма çук. Тунă преступленишĕн вара явапне тытмах тивет. Çак тĕслĕх ыттисемшĕн те, эрех черкки пушатнă хыççăн хĕрарăм çине алă çĕклеме хăтланакансемшĕн урок пулинччĕ.

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**РФ прокуратурин Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсем енĕпе ĕçлекен следователĕ.**

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

*Паянхи кăларăма Муркаш район прокурорĕ, юстицин кĕçĕн советникĕ Сергей Александрович ФИРСОВ ертсе пырать.*

## Парăмсем çук

**Учительсене хавхалантару пайĕн укçине тӳлессипе Муркашри вăтам шкулта пăтăрмахсем пулнине илтнĕччĕ. Ку тĕрĕсех-и?**

**С. ВАСИЛЬЕВА, Г. КУЗЬМИНА.**

Район прокуратури пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенче педагогика ĕçченĕсене 2010 çулхи хыçа юлнă тапхăрта хавхалантару пайĕн укçине тӳлесе тăрассине тĕрĕсленĕ.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче «Муркашри вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕнче Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 136 статйин 6 пайне пăснине тупса палăртнă. Асăннă шкулта ĕçлекенсене 2010 çулхи апрель уйăхĕшĕн тӳлемелли 280578,46 тенкĕ парăм пурри çиеле тухрĕ. Вăл шутра 189681,08 тенкĕ – хавхалантару пайĕн укçи.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе çитменлĕхсене пĕтерме представлени тăратрăмăр, 1 № суд участокне 67 ĕçлекене 240946 тенкĕ ĕç укçине шыраса пама суд приказĕсем кăларма заявлени çыртăмăр. Прокурорăн иск ыйтăвĕсене суд ларăвĕччĕнех пурнăçланă.

## Вăхăтра тӳлемелле

**Ĕç укçин калăпăшне кăтартакан расчет листине вăхăтра паманнишĕн е ĕç укçине вăхăтра тӳлеменнишĕн явап тыттараççĕ-и?**

**Редакцие шăнкăравланинчен.**

Çакăн майлă тĕслĕх кăçал та пулнă. «Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕнче ĕçлекенсем ыйтнипе район прокуратури тĕрĕслев ирттерчĕ. Педагогсен коллективĕ 2010 çулхи май уйăхĕнче аванс укçине вăхăтра тӳлеменнине тата ĕç укçин пайĕсене, калăпăшне тата тытăнса пыракан укçа калăпăшне кăтартакан расчет листисене паманнине пĕлтерчĕ.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕрентекенсен ыйтăвĕ сăлтавланни палăрчĕ.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тата Тойкилтĕри шкул директорĕн ячĕпе çитменлĕхсене пĕтерме представленисем тăратрăмăр.

***Районти граждансен ĕç прависене пăсасси ан пултăр тесе тата вĕсене асăрхаттарас тĕллевпе Муркаш район прокуратуринче «хĕрӳ лини» йĕркеленĕ. Ĕç прависене пăсни çинчен, вăл шутра ĕçе ĕç договорĕсĕр йышăнни çинчен те çак номерпе пĕлтерме пултаратăр: 62-1-05.***

# Ыттисемшĕн – тĕслĕх

**Ĕçре тăрăшуллисем**

*Бронислав Димитриевич Вязов Муркашри кирпĕч заводĕнче пĕрремĕш кун мар. 1998 çултанпа вăй хурать вăл кунта. Вăл – производство механикĕ. Хăйĕн тивĕçне епле пурнăçласа пынинчен пĕрлехи ӳсĕм те килнине аван ăнланать вăл.*

*Бронислав Димитриевичăн ăсталăхĕ те, опычĕ те çителĕклĕ. Коллективри ĕçченсене сĕнӳпе те, усăллă канашпа та пулăшма ӳркенсе тăмасть вăл. Çавăнпах ĕнтĕ вăл администраци умĕнче те ырă ят çĕнсе илнĕ, коллективра ăна хисеплеççĕ.*



*Сăн ӳкерчĕкре: производство механикĕ Б.Д. Вязов.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Килти хушма хуçалăх**

## Чечексем те тимлĕх ыйтаççĕ

***Суханран тухакан чечексене пăхса тăма ансат. Анчах та вĕсем сире кашни çулах илемлĕ чечексемпе савăнтарччăр тесен çуллахи вăхăтра та вĕсене тимлĕх уйăрмалла.***

**ТЮЛЬПАНСЕН** суханĕсене июль-август уйăхĕсенче кăларса илмелле. Вĕсене сывлăш лайăх вылякан, тĕттĕмрех, нӳрĕк таман вырăнта типĕтмелле. Типсе çитсен (14-20 кунтан) вĕсене тасатмалла. Шăпах çак вăхăтра вĕсен çитес çул чечек кăлармалли папаксем тытăнаççĕ. Чирлĕ сухансене усрамалла мар.

Сентябрь вĕçĕнчен пуçласа октябрь уйăхĕн çурри таран – тюльпансене лартса хăвармалли вăхăт. Вĕсене çĕр ăшне 20 см таранах лартмалла.

**НАРЦИССЕНЕ** куçарса лартас терĕр пулсан унăн суханĕсене июль уйăхĕнче кăларса илмелле. Çак вăхăта пăхăнмалла, мĕншĕн тесен каярах юлсан чечекĕн суханне амантма пултаратăр: унăн тымарĕсем тепĕр хут аталанма пуçлаççĕ. Нарцисс суханĕсене те тюльпан суханĕ пекех типĕтмелле.

Çĕнĕ вырăна куçарса лартассине август вĕçĕнче–сентябрь пуçламăшĕнче пурнăçламалла. Ĕçе кая хăварсан тымар тытăмĕ аталанса юлайманнипе чечек япăх хĕл каçма пултарать. Нарцисс суханĕсене 15 см тарăнăш лартаççĕ.

## Аукцион

**Извещение о проведении аукциона**

Администрация Моргаушского района в соответствии с решением Собрания депутатов Моргаушского района от 29.04.2010 г. № С-40/5 «О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 27 ноября 2009 г. №С-36/9 «О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района на 2010 год», постановлением администрации района от 28.06.2010 № 497 «Об условиях приватизации муниципального имущества Моргаушского района» извещает о проведении аукциона на право заключения договора купли–продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2010 году, с одновременной приватизацией земельного участка на котором оно расположено.

Организатор аукциона – отдел имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Чувашской Республики, место нахождения- 429530 с. Моргауши, ул. Мира д.6, каб. 312 , адрес электронной почты – imu100@morgau.cap.ru, номер контактного телефона (883541) 62-2-66.

Способ приватизации – аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене.

Место расположения объекта – Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская д.15, общей площадью 873,8 кв.м., двухэтажное кирпичное здание, инвентарный № БТИ 11316 (Лит.А) и земельный участок с кадастровым номером 21:17:060401:298 из категории земли населенных пунктов, разрешенное использование: для содержания и обслуживания зданий и сооружений, общей площадью 6006 кв.м., ограничения и обременения земельного участка не имеются.

Начальная (минимальная) стартовая цена (цена лота) – 956 370 рублей (Девятьсот пятьдесят шесть тысяч триста семьдесят рублей), шаг аукциона -5 % от начальной стартовой цены.

Сроки подачи заявок - с 30.06.2010 года по 30.07.2010 года.

Задаток в размере 20% от начальной цены объекта недвижимости, подлежит уплате до 30.07.2010, перечисляется по следующим реквизитам: получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении в поле «Назначение платежа» указать: «Задаток за участие в аукционе по продаже объекта муниципального имущества».

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона, не позднее чем за три дня до даты окончания срока приема заявок на участие в аукционе.

Для участия в аукционе претенденты представляют следующие документы:

*Для юридических лиц:*

· заявку в установленной форме;

· платежное поручение с отметкой банка об исполнении, подтверждающее внесение суммы задатка;

· заверенные копии учредительных документов;

· доверенность на подачу заявки, участия в аукционе, на право подписи договора о задатке, составленную и заверенную в установленном порядке, в случае совершения указанных действий представителем претендента;

· опись представленных документов в 2-х экземплярах, подписанная претендентом.

*Для физических лиц:*

· заявку в установленной форме;

· платежное поручение с отметкой банка об исполнении, подтверждающее внесение уставной суммы задатка;

· документ, удостоверяющий личность (копия);

· доверенность на подачу заявки для участия в аукционе, на право подписи договора о задатке, составленную и заверенную в установленном порядке, в случае совершения указанных действий представителем претендента;

· опись представленных документов в 2-х экземплярах, подписанная претендентом.

Аукцион проводится по адресу: 429530 Чувашская Республика Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира д.6, время проведения 3 августа 2010 года в 10 часов 00 минут по московскому времени.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка.

Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Ознакомление с иной информацией об аукционе, условиями договора купли-продажи, реквизитами счетов для внесения задатка по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 313.

**Извещение о проведении аукциона**
**на право заключения договоров купли-продажи земельных участков**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики «О проведении открытого аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории моргаушского района Чувашской Республики» от 28.06.2010 №498, «Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, выставляемых на торги (аукцион, конкурс)» от 13.05.2010 № 391, «Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, выставляемых на торги (аукцион, конкурс)» № 413 от 21.05.2010.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

**Контактные лица**: Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Колесникова М.Н., главный специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99.

**Характеристика объектов купли-продажи**:

**Лот №1** - земельный участок с кадастровым номером **21:17:071001:163**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:071001, общей площадью 3100.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 5600.00 (пять тысяч шестьсот) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:130103:152**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для строительства и эксплуатации зданий и сооружений», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Центральная, общей площадью 1809.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Технические условия: имеется возможность подключения к сетям инженерной инфраструктуры. Плата за подключение объекта к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по согласованию с организациями – поставщиками услуг.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 20840.00 (двадцать тысяч восемьсот сорок) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:060901:53**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Кумыркасы, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:060901, общей площадью 2157.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 26445.00 (двадцать шесть тысяч четыреста сорок пять) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:080401:201**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для строительства гаража и бани», местоположение Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с.Юнга, ул. Центральная, общей площадью148.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Технические условия: имеется возможность подключения к сетям инженерной инфраструктуры. Плата за подключение объекта к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по согласованию с организациями – поставщиками услуг.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 13200.00 (тринадцать тысяч двести) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №5** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:101001:114**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для индивидуального жилищного строительства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Семенькасы, ул. Центральная, общей площадью 4008 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Технические условия: имеется возможность подключения к сетям инженерной инфраструктуры. Плата за подключение объекта к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по согласованию с организациями – поставщиками услуг.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 51300.00 (пятьдесят одна тысяча триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

**1**. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 313 по рабочим дням с 9.00 до 15.00 по адресу организатора аукциона со дня опубликования извещения о проведении аукциона в районной газете «Сентеру ялаве» и размещения его на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

**2**. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

**3.** Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

**4.** Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

**5.** Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется **опись документов** в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе - **30 июля 2010 года, 17:00 часов.**

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №313, а также на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии **- 2 августа 2010 г. в 10.00 часов по адресу организатора аукциона.**

Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка.

Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится **4 августа 2010 года по месту нахождения организатора конкурса:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 8.40, Лот №2 – 9.00, Лот №3 – 9.20, Лот №4 – 9.40, Лот №5 – 10.00

